# Çĕнĕ пуçлăхăн АПКна ВТО условийĕсенче çĕклеме тивĕ

**РФ Ял хуçалăх министерствин çĕнĕ пуçлăхĕ Николай Федоров ял хуçалăхĕн çивĕч ыйтăвĕсене, нушисене лайăх ăнланать – çапла шухăшлаççĕ РФ Патшалăх Думинче.**

REGNUM информаци агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх – министрсен çĕнĕ кабинечĕ пирки сăмах пуçарса Патшалăх Думин Аграри ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитечĕн председателĕн çумĕ Надежда Школкина /«Пĕрлĕхлĕ Раççей»/ çапла палăртнă: «Федоров – çĕр çынни, ял ыйтăвĕсене ăнланакан, вĕсене татса пама хатĕр çын. Федоровăн «ялăн кризис çулĕсенче аркатнă социаллă аталанăвне çĕклеме тивĕ». Çавăн пекех çĕнĕ министрăн «2013-2020 çулсенче ял хуçалăхне аталантармалли тата ял хуçалăх продукцийĕн, чĕр таварпа апат-çимĕçĕн рынокĕсене ВТО ирĕк панă виçесемпе, урăхла каласан – 4,5 млрд доллар мар, 9 млрд доллар – йĕркелемелли патшалăх программине йышăнмалла пулать».

Кунсăр пуçне, тенĕ депутат, «Раççее Пĕтĕм тĕнчери çак организаципе çыхăнтарнине шута илсе хамăрăн сысна ĕрчетес отрасле, çу туса кăларассине аталантарма мерăсем йышăнмалла, таможньăпа тариф политикине тӳрлетӳсем кĕртмелле тата ыт.те».

Патшалăх Думин Аграри ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитечĕн председателĕн çумĕ Сергей Доронин /«Тĕрĕслĕхшĕн тăракан Раççей»/ Федоровăн паха енĕсен шутне вăл Хура тăпраллă мар зонăри, Атăл тăрăхĕнчи регионсен çивĕч ыйтăвĕсене тата нушисене лайăх пĕлнине кĕртнĕ. «Хуçалăхсем унта пысăк тупăшсемпех ĕçлеймеççĕ, çитменнине тата парăмсем ура хураççĕ. Раççейĕн историлле облаçĕсенчи миллион-миллион çын шăпи вĕсенчен килет тата», – тенĕ С.Доронин. «Çĕнĕ министр çанталăк тĕлĕшĕнчен йывăр условиллĕ зонăсенче агропромышленноç комплексне пулăшакан тытăма тума пултарсан – çакă питех те пысăк çитĕнӳ пулĕ», – шанчăка çухатмасăр калать комитет председателĕн çумĕ.

Патшалăх Думин Аграри ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитечĕ министерствăпа тачă çыхăнса ĕçлĕ. «Николай Васильевичăн компетентлăхĕ, йĕркелӳçĕ пултарулăхĕ тата хастарлăхĕ агропромышленноç комплексĕпе ял хуçалăхĕ умĕнче тăракан тĕллевсене ăнăçлă пурнăçлама пулăшĕç. Шанатăп: Ял хуçалăх министерствипе пĕрле эпир хамăр çĕр-шыври тавар туса кăларакана хӳтĕлекен çĕнĕ саккунсем йышăнăпăр», – палăртнă Патшалăх Думин Аграри ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитечĕн пуçлăхĕ Николай Панков /«Пĕрлĕхлĕ Раççей/.

• *Ыр кăмăллăх*

# Ачасене пулăшни – сăваплă

Йĕркеллĕ ашшĕ-амăшĕнчен кашниех ывăл-хĕрне тĕрĕс-тĕкел пăхса çитĕнтерессине тивĕçлипе хаклать: вĕсене чи лайăх садике, шкула вырнаçтарма, интереслĕ кружока е секцие яма тăрăшать. Кулленхи тĕркешӳре хамăрпа юнашар аслисен хӳттипе ăшшине туйман ачасем пуррине, шел те, тепĕр чухне асăрхамастпăр. Вĕсен шăпине çăмăллатассишĕн те пирĕн çине тăмалла, мĕншĕн тесен эпир пĕр обществăра пурăнатпăр.

Шупашкарти Мускав район администрацийĕн ачалăха сыхлакан пайне Наталья Коваль пынă. Пушă алăпа мар тата – ача-пăча тумĕ тултарнă пысăк хутаçпа. Пурте çĕнĕ: пĕчĕккисем валли те, шкула çӳрекенсене юрăхли те.

Республикăра иртекен “Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн” марафона чылай предприяти-организаци, уйрăм çын хăйсен тӳпине хыврĕç. Акă “Отделфинстрой” ООО сăваплă ĕçе çулленех пуçарулла хутшăнать. Кăçал та унта вăй хуракансем марафон счетне 45 пин тенкĕлĕх пуянлатрĕç.

Тĕп хуламăрти Калинин районĕнчи 2-мĕш çăкăр заводĕ – 100 пин, “Чăвашсетьгаз” АУО – 93370, “Акконд” АУО – 50 пин, хулари 2-мĕш больница – 28900, хулари 1-мĕш клиника больници – 31750, “Новоюжный” ООО – 13 пин, “Промтрактор”, “Чăваштырăпродукт”, “Лента” АУОсем 10-шар пин тенкĕ куçарнă. Районти предприяти-организаци ыр кăмăллăх пухмачне пĕтĕмпе 390 пин тенке яхăн хывнă.

И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУн вырăс филологи факультечĕн студенчĕсем вара хăйсем шефа илнĕ пĕчĕк тусĕсем патĕнче Йĕпреçри интернат çуртĕнче пулнă. Вĕсене канцтавар, футбол мечĕкĕсем парнеленĕ, ачасем валли тĕрлĕ вăйă-тупăшу йĕркеленĕ, юрă-ташă вĕрентнĕ, ӳкерес тата оригами енĕпе мастер-класс ирттернĕ.

Сăваплă юхăма Элĕксем те хастар хутшăнаççĕ. Пултарулă çамрăксене пулăшмашкăн, сусăрсене, тăлăхсене тата ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнисене сыватмашкăн тата ачалăха халалланă ыр кăмăллăх программисене пурнăçламашкăн вĕсем 53 пин тенкĕ пухнă.

Марафона кашниех хутшăнма пултарать – “Раççей ача-пăча фончĕ” общество организацийĕн Шупашкар хулинчи Петров урамĕнчи 7-мĕш çуртĕнче вырнаçнă регион уйрăмне пымалла кăна е 62-89-42 телефонпа шăнкăравламалла.

Укçана çак реквизитсемпе куçармалла:

Расчетный счет № 40703810075220160067 в отделении № 8613 Сбербанка России г. Чебоксары,

БИК 049706609, к/с 30101810300000000609,

ИНН 2128005408, КПП 213001001.

Получатель ЧРО ООБФ “Российский детский фонд”.

■ **В.АНТОНОВА**

• *Килĕшӳ*

# Икĕ еншĕн те усăллă

**Хальхи вăхăтра пысăк квалификациллĕ те конкуренцие тӳсĕмлĕ специалистсем хатĕрлес тесен вĕренӳ учрежденийĕсен бизнес пĕрлĕхĕпе, предприяти-организаципе тачă çыхăнса ĕçлемелле. Ку меслет икĕ еншĕн те усăллă пулни каламасăрах паллă. Вăл е ку специальноçа алла илекеншĕн те меллĕ.**




Çакна тĕпе хурсах нумаях пулмасть И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ тата “Дорисс” АУО пĕрле килĕштерсе ĕçлесси пирки килĕшӳ турĕç. Асăннă документа аслă шкул ректорĕ Всеволод Агаковпа предприятин генеральнăй директорĕ Игорь Рощин алă пусрĕç.

“Эпир университетри строительство факультетне малалла аталантарма ĕмĕтленетпĕр. Çак тĕллеве пурнăça кĕртмешкĕн “Дорисс” АУО пулăшасса шанатпăр. Паян алă пуснă килĕшĕве тĕпе хурса факультетра çĕнĕ направленисем, уйрăммăн илсен çул-йĕр строительствипе çыхăннисем, уçма палăртатпăр. Мĕншĕн тесен пирĕн çĕр-шывра çулсен ыйтăвĕ питĕ çивĕч”, – терĕ Всеволод Георгиевич. Игорь Валентинович хăй ертсе пыракан компани пирки кĕскен каласа кăтартрĕ, организацие анлă профильлĕ специалистсем кирлине, вĕсене АУО ертӳлĕхĕ тĕрлĕ енлĕн пулăшма тăрăшнине пĕлтерчĕ.

Килĕштерсе ĕçлесси пирки калакан килĕшӳре енсем специалистсене хатĕрленĕ тата вĕсен квалификацине ӳстернĕ, ăслăлăх тĕпчевĕсем, семинар-конференци ирттернĕ çĕре хутшăнассине палăртнă. ЧПУпа “Дорисс” пĕр-пĕрне эксперт тата консультаци пулăшăвĕ кӳрессине асăннă. Пултаруллă студентсене курс тата диплом ĕçĕсем çырма, практикăна çак компание ярĕç. АУО хăйĕн проекчĕсене пурнăça кĕртессипе çыхăннă методика материалĕсене хатĕрлемешкĕн аслă шкулти строительство факультетĕнче пĕлĕвне ӳстерекенсене, магистрантсемпе преподавательсене явăçтарĕ.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

• *Аталану çулĕпе*

# Паха вăрлăх, ăратлă выльăх сутаççĕ

**Етĕрне районĕнчи «Ленинская искра» хуçалăхра кашни пулмассерен çĕнĕлĕх асăрхатăп. Хальхинче çур аки умĕн «Джон Дир» трактор валли «Kverneland» комплект туяннă. Хакĕ аванах «çыртать», анчах сĕрмелли-çунтармалли материала чылай перекетлет, ĕç тухăçлăхне ӳстерет.**

Ачаксем самана таппинчен юласшăн мар, ял хуçалăхĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăр ыранхи куна шанса ӳсĕм çулĕпе утаççĕ. Коллектива Валерий Герасимов председатель ертсе пырать. Район кунта çулсерен семинар-канашлу ирттерет. Валерий Геннадьевичран хуçалăх ĕç-хĕлĕпе паллаштарма ыйтрăм.

– Çурхи ĕçсем вĕçленсе пыраççĕ. Сухаласа акмалли çĕр лаптăкĕ 4 пин гектар ытла. Çурхи культурăсене 1200 гектар çинче акатпăр. Кĕрхисем 400 гектар çинче начар хĕл каçнă, çĕнĕрен акма тивет. Паллах, ку тăкаклă. Анчах çĕре пушă вырттараймăн.

Колхоз вăрлăх хатĕрлессипе тĕллевлĕ ĕçлет. Çулсерен суперэлита туянатпăр. Кăçал та 105 тонна сутăн илтĕмĕр. Районти тата республикăри хуçалăхсене пĕрремĕш репродукциллĕ урпа, тулă тата сĕлĕ вăрлăхĕ сутатпăр.

**– Валерий Геннадьевич, техника паркĕ пирки мĕн каланă пулăттăр?**

– Машина-трактор паркĕ çулсерен çĕнелет. Ку чухне хăватлă техникăсăр ӳсĕмлĕ ĕçлеймĕн. Кăçал кăна 6 миллион ытла тенкĕлĕх сеялкăпа культиватор туянтăмăр. Энерги перекетлекенни. Культиватор çĕре 9 метр сарлакăш кăпкалатма май парать. Унсăр пуçне утă çулма тата пуçтарма çĕнĕ агрегатсем илтĕмĕр.

Сĕрмелли-çунтармалли материал вăхăтра кӳрсе килетпĕр. Патшалăх пулăшăвĕ вырăнлă.

Механизаторсем çителĕклĕ. Вĕсен ĕçри хастарлăхĕ кăмăла çĕклет. Александр Макаров, Александр Суворов, Геннадий Филиппов, Евгений Кириллов, Владимир Ижеев, ыттисем çĕре кĕске вăхăтра хатĕрлерĕç. Тырă акнă çĕрте Геннадий Тимофеев, Алексей Кольцов, Сергей Николаев, Юрий Иванов, Сергей Петров, Сергей Палейкин уйрăмах хастар пулчĕç. Валерий Дмитриев 20 çул ытла трактор çӳретет.

Водительсем те мухтава тивĕç. Геннадий Юхтанов, Михаил Смирнов, Валерий Петров, Владислав Алексеев, Вадим Дмитриев яланах рейсра.

**– Сирĕн хуçалăх республикăра хăмла туса илессипе чапа тухнă...**

– Тĕрĕсех калатăр. Эпир ку енĕпе ăнăçлă ĕçлетпĕр. Кăçал та хăмла плантацийĕ 40 ытла гектар йышăнать. Çулсерен çĕнĕ сортсем лартатпăр. Хальлĕхе татса паман ыйтусем те пур. Типĕ хăмлана вырнаçтарма хĕн. Çав вăхăтрах патшалăх хăмлапа ĕçлекен хуçалăхсене пулăшни хавхалантарать. Раççейри сăра завочĕсем экологи енчен таса та паха продукципе ĕçлеме тытăнасса шанас килет.

**– Выльăх-чĕрлĕх отраслĕепле аталанать?**

– Кăçал йышне ӳстерме палăртрăмăр. Хальлĕхе сăвакан ĕне 300 ытла. Фермăсенчи ĕçе механизацилеме тăрăшатпăр. Лапракассинчи ĕне фермине сĕт валли çĕнĕ пăрăхсем вырнаçтартăмăр. Колхоз ăратлă выльăх ĕрчетет. Республикăри хуçалăхсене çамрăк пăрусем сутатпăр. Кăçал çĕнĕ ферма тума палăртатпăр.

■ **Юлия МАРЕЕВА**

# Паттăрсене асăнса

Çу уйăхĕн 26-мĕшĕнче Санкт-Петербургра ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин Чăваш Енре çуралнă, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин çулĕсенче Ленинграда хӳтĕлесе пуç хунă паттăрсен ячĕпе Асăну плити уçма хутшăннă.

Пухăннисем малтанах пĕр минут шăп тăнă, унтан тинĕс-çар базин оркестрĕ Раççей Гимнне тата Чăваш Ен Гимнне янраттарнă. Асăну хăмине сăвапланă хыççăн Санкт-Петербург тата Чăваш Республики, çавăн пекех Нева çинчи хулари Чăваш наци культура автономийĕн ячĕпе чечек кăшăлĕсем хунă. Мухтав аллейинче экскурси йĕркеленĕ. Мемориал музейра Иван Моторин хисеплĕ хăнасен кĕнекине çырса хăварнă. Официаллă делегаци валли йĕркеленĕ культура программи РФ тава тивĕçлĕ, ЧР халăх художникĕн, Раççей ӳнер академийĕн член-корреспонденчĕн Анатолий Рыбкинăн мастерскойĕнче малалла тăсăлнă.

Çав кунах делегаци Сăваплă Троица Александр Невский лаврин масарĕ çинче пулса ентешĕмĕрĕн, хĕвел тухăç тĕпчевçин Никита Бичуринăн вил тăпри çине чечексем хунă.

■ **С.ВОЛКОВ**

• *«Çавра сĕтел»*

# Халăх улшăну кĕртме сĕнет

Чăваш Республикин юстици министрĕ Надежда Прокопьева нумаях пулмасть массăллă информаци хатĕрĕсене панă интервьюра çĕр-шывра иртекен политика тытăмĕн реформин тĕп шăнăрне палăртнăччĕ: «Тĕллевĕ – граждан обществин влаçа витĕм кӳрессин çĕнĕ механизмĕсене туса хурасси тата малтанхисене каялла тавăрасси. Унăн пĕлтерĕшлĕ саманчĕсем – партисемпе çыхăннă саккунсен либерализацийĕ, кĕпĕрнаттăрсен тӳрĕ суйлавĕ, РФ Патшалăх Думине йĕркелессин принципĕсене улăштарасси. Çаксем граждан обществин тĕрлĕ вăйĕсене хăтлассин çĕнĕ мелĕсене палăртĕç, суйлавçăсене тата ытларах майсем пама пулăшĕç тесе шухăшлатăп...»

Министрсен Кабинечĕн Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ертсе пынипе иртнĕ анлă ларăвĕнче правительство членĕсем суйлав темипе çыхăннă виçĕ саккун проектне тĕплĕ сӳтсе яврĕç, вĕсене Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ сессийĕн кун йĕркине кĕртме сĕнчĕç. Çакă пĕтĕмпех çĕр-шыв парламенчĕн депутачĕсене суйланă чухне политика партийĕсене суйлавçăсем алă пуснине пухассинчен хăтарнипе тата Раççей регионĕсен пуçлăхĕсене халăх суйланипе палăртма йышăннипе çыхăннă. Çавна май тăван республикăмăрăн Конституцине тата хăш-пĕр саккунне улшăнусем кĕртме тивет. Республика Пуçлăхĕн суйлавĕ пирки ятарлă саккун йышăнмалла пулать. Асăннă саккун проекчĕ суйлавăн мĕн пур тапхăрне тĕплĕ уçăмлатать: кандидат мĕнле регистрациленме пултарнинчен пуçласа суйлав кампанине ирттерме ятарлă фонд йĕркеленмелли правилăсем таранах. Пĕлтерĕшлĕ çак пулăмпа çыхăннă чылай ыйтăвăн хуравне тупма пулать кунта.

Министрсен Кабинечĕн ларăвĕ хыççăн Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн пиллĕкмĕш сессийĕн пĕрремĕш тапхăрĕнче ку ыйтăва сасăлава кăларчĕç. Патшалăх Канашĕн депутачĕсемпе пĕрлех сесси ĕçне хутшăннă район пуçлăхĕсемпе район администрацийĕсен пуçлăхĕсем, район-хула депутачĕсем те тишкерĕве хастар хутшăнчĕç. Саккун проектне пĕрремĕш вулавпа йышăннă хыççăн, ăна, иккĕмĕш вулавпа çирĕплетиччен, сӳтсе явма республикăри халăха хутшăнтарма сĕнчĕç. Вырăнсенчен Патшалăх Канашне, Министрсен Кабинетне, район администрацийĕсене тĕрлĕ канаш-сĕнӳ нумай килет.

Иртнĕ эрне вĕçĕнче Чăваш Енри общество организацийĕсем те унран пăрăнса юлас темерĕç, «Чăваш Республикин Пуçлăхне мĕнле суйлас?» ыйтăвăн хуравне тупма «çавра сĕтел» тавра пухăнчĕç. Тĕрлĕ шухăш-кăмăллă çынсем республикăн социаллă сферипе экономика аталанăвĕ мĕнле çын аллинче пулассишĕн пăшăрханнине пытармарĕç. Ыйту чăннипех пĕлтерĕшлĕ: Чăваш Ен Пуçлăхĕн суйлавне уйрăм çын хăйĕн кандидатурине сĕнме пултарать-и /ку ыйтăва федерацин 40-ФЗ саккунĕ регионa хăйне татса пама сĕнет/ тата Пуçлăх вырăнне йышăнас текен кандидатăн муниципалитет депутачĕсен хушшинче миçе процент сасă /федераци саккунĕпе 5 процентран пуçласа 10 таран, регионсен – хăйсен/ пухмалла? Муниципалитет «фильтрĕн» шайне «çавра сĕтеле» хутшăннисем тавлашмасăрах палăртрĕç – 7-рен пуçласа 10 процент.

«Асăннă саккун проектне пула республика ертӳлĕхĕн пĕрремĕш çыннин вырăнне йышăнма хатĕрленекен кандидатăн малашне федераци влаçĕпе кăна мар, вырăнти влаçпа та пĕр чĕлхе тупмалла. Çакă яваплăха та, тăрăшулăха та ӳстерет», – терĕ «Хӳтлĕх» общество юхăмĕн ертӳçи Евгений Слепов.

Уйрăм çын суйлавра хăйĕн кандидатурине сĕнесси пирки шухăш пайланчĕ. Пĕрисем демократи принципĕсене тĕпе хурса тата суйлав кампанийĕнчи кĕрешĕве çивĕчлетме кирлĕ теççĕ, оппонентсем вара ку экономикăпа политика тĕлĕшĕнчен усăллă маррине палăртаççĕ.

«Пирĕн республикăшăн ку ыйту паян-ыран çав тери çивĕч тăмасть, мĕншĕн тесен республика Пуçлăхĕн суйлавĕ Чăваш Енре 2015 çулта кăна иртмелле. Çавăнпа та Пуçлăх пулас текенĕн çак тапхăрта хăйĕн партине йĕркелеме вăхăт пур. Халĕ пĕр шухăштĕллевлĕ 500 çын уйрăм парти регистрацилеме пултарать. Нимĕнле чару та çук. Сумлă вырăна пысăк енчĕклĕ çын килсен, иккĕленместĕп, вăл республикăшăн мар, хăйшĕн кăна тăрăшĕ», – терĕ Шупашкар хула депутачĕ Владимир Викторов. Владимир Николаевич хыççăн çамрăксен юхăмĕн, профессионал писательсен пĕрлĕхĕн, Афганистан вăрçин тата юнлă хирĕç тăру ветеранĕсен канашĕн ертӳçисем тата ыттисем республика Пуçлăхĕн должноçне тĕрлĕ авантюристпа политиканран хӳтĕлесе хăварма, уйрăм çын хăйĕн кандидатурине сĕнессине пăрахăçлама сĕнчĕç. «Модернизаци» проект ертӳçи, социологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ Алексей Карпов «çавра сĕтеле» пĕтĕмлетсе унăн йышăнăвне Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Патшалăх строительстви, вырăнти хăй тытăмлăх, регламент тата депутат этики енĕпе ĕçлекен комитетне çитерме шантарчĕ.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

• *Хӳтлĕх*

# Аслă ăру çыннисене мĕн хумхантарать?

**Красноармейски тăрăхĕнче 4850 ытла пенсионер пурăнать. Вĕсене ватлăх укçипе тивĕçтермешкĕн уйăхсерен 40 млн /сăмах май, районти предприяти-организацире Пенси фондне хывмашкăн 9 млн кăна пухăнать/ тенкĕ каять.**



**•*Альбина Петрова Ыхракассисене пенси çĕнĕлĕхĕсемпе паллаштарать.***

Аслă ăру çыннисене мĕн хумхантарать, тӳлеве вăхăтра çитерсе параççĕ-и? – çак тата ытти ыйтăва вăхăтра уçăмлатас, вырăнти халăха пенсипе çыхăннă çĕнĕлĕхсемпе, шкул ачисене пулас пенсие çамрăклах йĕркелеме тытăнмалли йĕркепе паллаштарас тĕллевпе асăннă фондăн районти управленийĕн специалисчĕсем вырăна тухса çӳреççĕ, ватăсемпе кăна мар, вăй питти халăхпа, вĕренекенсемпе тĕл пулаççĕ. “Çирĕплетнĕ графикпа уйăхра 2-3 яла çитсе килетпĕр, – тет Альбина Петрова ертӳçĕ. – Центртан аякра вырнаçнисенче пурăнакансене Пенси фончĕн управленине килсе çӳреме кансĕррине шута илсе ытларах вĕсенче пулма тăрăшатпăр.”

Черетлĕ тĕл пулăва Пикшик ял тăрăхĕнче, Муркаш районĕпе чиккĕленекен ялсенче, ирттерчĕç. Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕн клиент службин ятарлă микроавтобусĕпе çула тухрĕç. Çынсен ыйтăвĕсене татса пама кирлĕ кăтартусем алă айĕнчех: кăткăс техника вĕсене çийĕнчех монитора кăларать.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăх арканнине пăхмасăр çĕр çынни хăйĕн ĕçĕпе пурăнать. Ыхракассинче те çавăн пекех: пĕри фермер патĕнче тăрăшать, тепри килти пахчара вăй хурать, виççĕмĕшĕ çĕр-шывăн ытти хулине укçа тума çӳрет. Çавна май тĕл пулăва пынисенчен ытларахăшĕ тивĕçлĕ канăва тухнисем пулчĕç. Альбина Валерьяновна вĕсене управленин паянхи ĕç-хĕлĕ, страховани стажĕ тата взносĕ, патшалăх софинансированийĕн программи пирки тĕплĕн каласа пачĕ, пенсипе çыхăннă çĕнĕлĕхсемпе, малашлăх тĕллевĕсемпе паллаштарчĕ. Çавна май кинемейсемпе мучисене хăйсен ватлăх укçинчен ытларах Мускава ĕçлеме çӳрекен ывăлĕсемпе кĕрӳшĕсен е мăнукĕсен пулас пенсийĕ канăçсăрлантарчĕ. Чылайăшĕ шалăва конвертпа илет иккен, апла тăк страховани взносĕ пырса кĕмест, пенси валли капитал пухăнмасть. Кун пек чухне çыннăн хăйĕншĕн тăрăшмалла, софинансировани программине хутшăнса çуллен 2 пин тенкĕрен пуçласа 12 пин хывмалла. Патшалăх çавăн чухлех хушса парать /паллах, унăн пулăшăвĕ 12 пинпе чикĕленет/. Сăмах май, 1957 çулта çуралнă хĕрарăмсем кăçал тивĕçлĕ канăва тухаççĕ. Енчен те çак программăна суйласа илнĕ тĕк пенсипе пĕрле çав шутран хушма тӳлеве тивĕçеççĕ.

80 çул тултарнă ватăна пăхнăшăн компенсаци тӳлессипе, çав тапхăр страховани стажне кĕни-кĕменнипе, пенсионера юлашки çула ăсатма уйăракан пособи виçипе, ветерансен çуртне вырнаçмалли йĕркепе интересленчĕç пухăннисем. Управлени ертӳçи Альбина Петрова кашнин ыйтăвнех туллин хуравларĕ, пенси, уйăхри укçа тӳлевĕ шутласа паракан пайăн тĕп специалисчĕ Ольга Афанасьева стажа, страховани взносĕн суммине, пенси капиталĕн ирĕкне кăткăс техникăпа усă курса çийĕнчех çирĕплетсе пама пултарчĕ, хăшнепĕрне архива кайса ĕçленĕ тапхăра ĕнентерекен документа шыраттарма сĕнчĕ.

Тĕпрен илсен Çеçмерте пурăнакансен те – кӳршĕсене канăçсăрлантаракан ыйтусемех: пенси ӳсĕмĕ, социаллă тӳлев, “Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ” ята тивĕçмешкĕн кирлĕ стаж тата ытти. Пенсие почтальонка вăхăтра валеçнипе кăмăллă ватăсем, унăн виçи пирки те ӳпкелешмеççĕ: кам мĕнле ĕçленĕ – çавна тивĕçнĕ. “Пурăнмалăх çитет, мĕн чухлĕ панипе çырлахмалла,” – терĕ сакăр вунă çултан иртнĕ кинемейсенчен пĕри.

Çитес çул пенсие тухма хатĕрленекен Иван Николаев управление каймасăрах тивĕçлĕ документсене йышăнăва пынă специалистсене парса ячĕ, Дарья Андреева вара пенси укçине перекет банкĕ урлă илсе тăма заявлени çырчĕ.

Пенси фончĕн компетенцине кĕмен ыйтусене хуравлама тиврĕ управлени специалисчĕсен. Ыхракассисене, тĕслĕхрен, ял халăхĕ сĕт сутма пултарайманни, Çеçмерсене Ямайкассинчи медпункт ĕçлеменнипе район больницине çӳреме тивни канăçсăрлантарать. Пенсионерсен чун ыратăвне яваплă çынсем патне çитерме шантарчĕ Альбина Петрова.

“Вырăнта халăха йышăнса вĕсенчен хăшне-пĕрне витĕмлĕ пулăшу пама пултарниех ĕç харама кайманнине çирĕплететет. Ватăсем ăшшăн тав туни кăмăла çĕклет, пирĕн служба кирлĕлĕхне çирĕплететет”, – тет ертӳçĕ.

■ **Валентина СМИРНОВА.**

Красноармейски районĕ

• *Криминал*

# Пĕрин те теприн алли кукăр

1969 çулта çуралнă Сергей Романов халĕччен çичĕ хут судпа айăпланнă та – Зона хушма ят ун çумне ăнсăртран çыпăçман. Тусĕ Геннадий Пищенко та суд умне пĕрре кăна мар тăнă. Халĕ вĕсен каллех судьяпа тĕл пулма тивет.

Ĕçсе хĕренкеленнĕ хыççăн çакскерсем Шупашкар районĕнчи Мускаринкасси ялĕнчи пĕр çурта вăрра кĕме каварлашнă. Хуçисем килте çуккине пĕлнĕ май пӳрт патне пахча урлă пынă. Пищенко чӳрече кантăкне ватса шала кĕнĕ, Романов лару-тăрăва сăнама тулта юлнă. Çуртран телевизор илсе тухнă. Такси чĕнсе илсе Ишлее кайнă, вăрланă телевизора пасартa пин тенкĕлле сутса янă.

Вăрăсене тупса палăртнă. Халĕ 6 çуллăхах ирĕклĕхсĕр юлма пултараççĕ.

* * *

Н. 18 çул та тултарман-ха, анчах пултарулăхĕ пур. Чăн та, сăмах кутăнла пултарулăх пирки.

Тусĕ патĕнче пулнă та – хĕр каçхине килне, Шупашкар районĕнчи Карачурана, таврăнма тухнă. Чарăнура автобусран тухнă май хăйĕнпе пĕрлех пĕр ӳсĕр арçын анса юлнине асăрханă – ăна вĕçертес темен. Маларах утнăскере хăваласа çитнĕ те унран тусăм патне шăнкăравламалла тесе телефон ыйтнă. Ӳсĕр пулсан та лешĕ хăйне джентльменла тытнă, палламанскере телефонне кăларса панă. Трофей алла лексен Н. арçынна вăхăтлăха çаврăнса тăма сĕннĕ – унăн тула тухас килнĕ-мĕн. Лешĕ унăн ыйтăвне каллех пурнăçланă. Тепĕр самантран çаврăннă та – хĕр çук та! Çĕр çăтнă тейĕн!

Арçын унталла утнă, кунталла – кăлăхах, килне телефонсăрах сулланнă. Полицирен тепĕр кунне ирхине пулăшу ыйтнă. Пакунлисем шырав пуçарнă, кукăр алăллă хĕре те, вăл вăрланă телефона та тупнă. Кĕçех Н. суд тенкелĕ çине ларĕ.

■ **Анатолий ИВАНОВ,**
**Шупашкар районĕн прокурорĕн çумĕ**